**Милли ушкăнĕнчен — «Канаш» союзне**

*(Асаилнисем)*

*1923 çул пуçламăшĕ.*

Чăваш автономин центрĕ Шупашкар хăйĕн организациллĕ пысăк ĕçĕсене тата 1921 çулхи выçлăх йывăрлăхĕсене çĕнтернĕ хыççăн хăвăрт аталанма тытăнать. Ку тĕлелле хальхи вăхăтра чăваш совет литературинче палăрнă юлташсем те чылайăшĕ Шупашкара пырса вырнаçаççĕ. Вĕсем хушшинче: революцичченех çырма пуçланă Шупуççынни (Н. Васильев), Полоруссов-Шелепи, тин çырма пуçлакансем — Ваçанкка, Лашман, Иван Мучи, Патман, Хумма Çеменĕ, Ф. Павлов, Максимов-Кошкинский; публицистсем — Элмен, Лява Платунĕ тата ыт. те.

Чăваш илемлĕ литератури тĕлĕшпе ĕçлекенсем йышлăланаççĕ пулин те ку вăхăтра Шупашкарта (çавăн пекех ытти хуласенче те) вăл литераторсене пĕрлештерсе тăракан нимле организаци тавраш̆е те çукчĕ-ха. Ун пек организаци тума хăтланнисем 1921 — 22 çулта Шупашкарта (Общество ревнителей чувашской литературы) тата 1920 çулта Чĕмпĕрте (литкружок) пулнă пулин те кусен ĕçĕсем ăнăçман. Тĕрлĕрен сăлтавсем пирки вĕсем часах саланса кайнă. Шупашкар организацийĕ хăйĕн ĕçĕсене нимĕнне те кăтартман, Чĕмпĕрти литкружок çеç 2 номер «Атăл юрри» ятлă журнал кăларса хăварнă.

Çаксем хыççăн чăваш литераторĕсем пĕр вăхăтра нимĕнле организацисĕр пурăнаççĕ. Çав хушăрах вĕсем хушшинче хăйсен литература организацине тума кирли çинчен час-часах калаçкалама пуçлани илтĕнет. Анчах калаçкалаççĕ пулсан та никам та вăл ĕçĕн пуçне тăрса ăна организацилесе яраканĕ çук.

Çитет çуркунне. Çак вăхăтра Шупашкара Миллипе Золотов Микули килсе вырнаçаççĕ. Кусем иккĕш те çитес уйăхсенчех чăваш литераторĕсен

ушкăнĕсене организацилекенсем пулаççĕ, анчах вĕсем пĕрне-пĕри хирĕç ĕçлекенсем.

* * *

Çуркунне. Ăшă та çутă апрель кунĕсем.

Пĕр канмалли кунхине, хам та сисмен, ман хваттере кăштăрт Миллиие Полоруссов кĕрсе тăраççĕ.

— Эй, Алексей Прокопч!.. Мĕнле килме пĕлтĕр? — хаваслантăм эпĕ Миллие йышăнса илсе. Ку пирĕн Миллипе Шупашкарти чи малтанхи курнăçу. Унччен энĕ ăна 1917 — 1918 çулсенче çех Хусанта ик-виçĕ хут курнăччĕ. Анчах çывăхран паллашман. Эпĕ хам енчен ăна вăл пĕр вăхăтра «Хыпар» хаçат редколлеги членĕ пулнăран «Хыпарăн» малтанхи номерĕ унăн сăввиссмпе тухнăран тата Чĕмпĕрти «Атăл юрри» журнал вăл пуçарнипе тухнăран аванах пĕлеттĕм. Çаксенчен шутласа эпĕ Милли чăвашсен пулас литераторĕ тесе хавасланнă, ăна хисепленĕ те.

Миллипе Полоруссов пырсан пирĕн калаçу чылай пычĕ. Милли мана Шунашкарта чăваш литераторĕсен организацийĕ тума кирли çинчен тата хăй ĕнтĕ халь ку ĕçе хĕрсех тытăнни çинчен каласа пачĕ. Вăл мана та хăйпе пĕрле ĕçлемешкĕн чĕнет. Эпĕ хĕпĕртесех унпала килĕшетĕп. Пирĕн Полоруссов та хавасланнипе йăлкăшса çех ларать.

Çав кунтан пуçласа Миллипе кашни кун пекех курнăçма пуçлатпăр. Пирĕн ĕç пуçарса яракан пĕчĕк ушкăн пулса тăрать. Вăл ушкăнра: Милли, эпĕ, Ваçанкка, Полоруссов ыт. те. Милли тăрăшать. Вăл чăваш илемлĕ литературипе интересленекен-сене шыраса тупса вĕсене хăй тавра пĕрлешмешкĕн тимлет. Çак хушăрах вăл пулас организаци валли устав хатĕрлет, организациллĕ пуху валли доклад тезисĕсене çырать ыт. те.

Акă эпир хамăр ĕç çинчен рабфакпа совпартшкулта вĕренекенсем хушшинче те пĕлтеретпĕр. Рабфакра Милли ушкăнне çырăнас текенсем 30 çынна яхăнах. Уйрăм паллă çынсенчен пирĕн ушкăна Иван Мучи, Максимов-Кошкинский, облĕçтăвком председателĕ С. Коричев, облĕçтăвком секретарĕ П. Михайлов, Федор Павлов тата урăххисем те кĕме пулчĕç.

Ĕçсем хăвăрт пыраççĕ. 1923 çулхи апрелĕн 29-мĕш кунĕнче чи малтан организациллĕ пуху пуçтарăнать. Пухура 40 — 50 çынна яхăн. Вĕсем хушшинче пуринчен ытла рабфакра вĕренекенсем. Пуху Милли докладне итленĕ хыççăн «Чăваш литературин ушкăнĕ» организаци уçмалла тăвать, унăн уставне йышăнать. Ушкăна ертсе пыма 5 çынтан Совет суйлаççĕ. Совет прсдседателĕ — Милли, секретарĕ Ваçанкка, членĕсем: эпĕ, Полоруссов тата рабфак студенчĕ И. Аверкиев пулатпăр.

Милли обществи хăй уçăлнă хыççăнах хăйĕн членĕсем валли чăваш çырулăхĕн правилисене вĕренмелли икĕ эрнелĕх курс туса иртерчĕ. Малтанхи кунсенчен пуçласах общество пĕтĕм чăваш писателĕсен 1-мĕш конференцине пухас пирки ĕçлемешкĕн тытăнать. Общество Совечĕн вăхăтлăха ĕçлемелли вырăнĕ облĕçтăвком (хальхи Республикăри тĕп библиотека çурчĕн) аялти хутĕнчи пĕр пӳлĕмре вырнаçса тăратчĕ. (Милли ун чухне Тĕп архив комиссинче ĕçлетчĕ. Вăл комисси облĕçтăвком çуртĕнчи Оргпай уйрăмĕнче вырнаçса тăратчĕ.)

Чăваш писателĕсен 1-мĕш конференцине пухас пирки ĕçлеме тытăнсан ĕçсем те чылай сиксе тухрĕç. Эпĕ, Ваçанкка, Полоруссов час-часах черетлĕн лит. обществăн вăхăтлăх пӳлĕмне кайса ĕçлетпĕр. Ку вăхăтра Милли хăй укçипе Чăваш литература обществин уставне пичетлеттерсе кăларать, общество ячĕпе штамппала пичет тутарать т. ыт. те.

Çак вăхăтрах Милли хăй обществи çине Д. Элменпе Золотов Микули енчен сиввĕн пăхнине, вĕсем унăн программине тиркенине те аванах пĕлсе

тӑрать. Акӑ пӗлетпӗр: эпир конференци пухма хатӗрленнӗ тӗлеллех, июнь уйӑхӗнче, Элменпе Николай Золотов та хӑйсем уйрӑм чӑваш писателӗсен ушкӑнӗ тума хатӗрленеççӗ иккен. Ку хыпар Миллие чылаях кансӗрлентерет, вӑл хӑш чух шикленме те пӑхать. «Элмен вӑл яланах мана хирӗç... Вӗсен ӗçлесси те пулас çук... Вӑл пирӗн ӗçе пӳлесшӗн анчах хӑй урӑх ушкӑн туса аппаланать», — тесе ӳпкелешет Милли...

Вӑл вӑхӑтра эпӗ Милли ушкӑнӗне çӗнӗрен организациленекен чӑваш писателӗсен «Канаш» союзӗ хушшинче мӗнле уйрӑмлӑх пулассине питех шутлама та тӑрӑшман. Мӗншӗн тесен Милли программи те вӗт «илемлӗ литература урлӑ ӗç халӑхне коммунистла шухӑшлама вӗрентмелле» тетчӗ. Çавӑнпа та эпӗ Милли обществине никам та салатакан пулас çук тесех тӑраттӑм.

* * *

Июлӗн малтанхи кунӗсем. Çав вӑхӑтра Милли обществи чӗннӗ чӑваш писателӗсен 1-мӗш конференцийӗ пуçтарӑнать. Конференци делегачӗсем пурте пекех Шупашкарта ӗçлекенсемпе вӗренекенсем; Хусантан тата ытти çӗртен килнисем пит те сахал.

Конференци уçӑлнӑ кунсенчех Элменпе Ник. Золотов пӗрлештернӗ чӑваш писателӗсен «Канаш» союзӗ организациленнӗ. Акӑ пирӗн конференцие çӗнӗрен пулнӑ «Канаш» союз членӗсем те пырса лараççӗ. Вӗсем хушшинче: Элмен, Н. Золотов, Шупуççынни, Хумма Çеменӗ, Ананий Михайлов т. ыт. те.

Милли кӗске сӑмахпа конференцие уçать. Конференци уçӑлнӑ хыççӑнах «Канаш» союз организаторӗсем хӑшӗ парти обкомӗ ячӗпе (Элмен), хӑшӗ «Канаш» редакци ячӗпе (Н. Золотов), хӑшӗ çӗнӗрен организациленнӗ «Канаш» союзӗ ячӗпе салам калама сӑмах илеççӗ. Вӗсем кашниех саламсене

каланӑ хыҫҫӑн сасартӑк Милли программине тиркесе унӑн обществине ҫӗмӗрмешкӗн тытӑнаҫҫӗ, Милли ушкӑнӗнчи ҫынсене ҫӗнӗрен уҫӑлнӑ «Канаш» союзне кӗме чӗнеҫҫӗ.

— Милли программи вӑл хытса шӑнса ларнӑ чӑваш аваллӑхӗ ҫинче тапӑртатса тӑрать... Милли чӗрӗлекен ҫутӑ, ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн тӑрӑшмасть... Милли национализменне туртӑнать... — тесе кӑшкӑраҫҫӗ трибуна ҫинчен хӗрсе кайнӑ Элменпе Золотов. Пирӗн Милли антӑрать, вӑл хӑй программишӗн вирлӗн хирӗҫ тӑраканни те пӗртен-пӗр ҫын анчах. Анчах ӑна лайӑххӑн калама ирӗк памаҫҫӗ.

Акӑ саламсем пӗтеҫҫӗ. Конференци 15 минутлӑха ӗҫе пӑрахать. Пурте ҫуллахи театр умне, Атӑл хӗррине тухаҫҫӗ. Конференци делегачӗсен сӑнӗсем пӑлханчӑк. Вӗсем акӑ каллех кӗҫ-вӗҫ темле хирӗҫӳ е тавлашу тухса каясса кӗтеҫҫӗ.

Акӑ Элменпе Золотов Н. темскер шӑппӑн калаҫса илеҫҫӗ те, Элмен театр умӗнче тӑракан халӑх еннелле пӑхса кӑшкӑрать:

— Итлӗр!.. Партийцӑсемпе комсомолецсем, пурте ман хыҫран «Камчатка» ҫине — вӑн ҫав больница хыҫне!.. Унта тӑватпӑр канашлу!.. — тесе кӑшкӑрчӗ.

Милли обществи членӗсенчен ҫурри ытла вӗренекенсем, — вӗсем пурте пекех комсомолецсем. Элмен кӑшкӑрсанах нумайӑшӗ ун хыҫҫӑн утса кайрӗҫ. Элмен вӗсене больница хыҫӗнчи Атӑл ҫыранӗ хӗррине илсе кайрӗ.

Театр умне Миллине пӗрле пӗр 5 — 6 ҫынран та ытла юлмарӗ.

Элменпе Золотов хӑйсем тавра пухӑннӑ ҫынсене Милли программин йӑнӑшӗсем ҫинчен каласа параҫҫӗ: «Кам хӑй шухӑшӗпе «Канаш» хаҫат платформи ҫинче тӑрать — ҫавсен пурин те ҫӗнӗрен организацилен̆ӗ «Канаш»

союз членне кĕмелле», — теççĕ вĕсем. Çакăн хыççăнах пурте пекех «Канаш» союзне кĕме сăмах параççĕ.

Конференци хупăннă май рабфакра вечер пулса иртрĕ. Ку вечерта Н. Золотовпа Милли нумай тавлашрĕç. Тавлашура Милли хăй пĕчченех тăрса юлни палăрчĕ. Юлашкинчен вăл мана çапла каларĕ: «Эпĕ сан çине хытă шаннăччĕ. Анчах эсĕ те вĕсем май çаврăнса ӳкрĕн. Халь ĕнтĕ эпĕ пĕр-пĕччен, демон пек пĕччен тăрса юлтăм... Каятăп ĕнтĕ ку Шупашкартан, кунта манăн нимĕн тумалли те çук, — тесе хучĕ...

Милли обществипе «Канаш» союзĕ хушшинчи уйрăмлăха эпĕ конференци хупăннă чух Миллипе Золотов Н. хушшинче пулнă пысăк тавлашуран тин иссе çитрĕм. Ку уйрăмлăх «Канаш» союэĕ «Канаш» хаçат платформи çинче тăрса чăваш илемлĕ литературинче класлă çул-йĕршĕн кĕрешес, малашне социализмла пурнăç тăвассишĕн кĕрешес задачăсене лартнинче. Милли хăй общества умне нимĕнле класлăха та асăрхамасăр, чăваш илемлĕ литературишĕн пурте пĕрле (националистсем те, кулакла писательсем те, пролетарла писательсем те) тăрăшас задача лартнă. Унăн уставĕнче «коммунизмла пурнăç тăвассишĕн ĕçлемелле» текен сăмахсем кĕртсе лартнă пулин те çак вăхăтрах — класс кĕрешĕвне çивĕччĕн тытса пырасси çинчен пĕр сăмах та шарламан. Кунсăр пуçне тата Милли чăвашсен авалхи йăлисене идеализацилесе вĕсем умĕнче пуç тайнă; чăваш халăх творчествине ытлашши хак парса ăна пулас искусствăллă творчество валли тĕслĕх те, ӳкерчĕк те тесе шутланă. Ку чăнах та çапла иккенĕ унăн уставĕнчен те курăнать. Чăн та, халăх творчествипе пысăк усă курмалла, анчах та ăна класлăх али витĕр тĕплĕн сăрхăнтарса илсе унпа асăрханса усă курма пĕлмелле. Çавăн пек тумаллине Милли хăй общества умне уççăн лартса паман, мĕншĕн тесен унăн тĕп шухăшĕ националимзлă культура тăвасси пулнă.

Çапла вара Милли пухнă чăваш писателĕсен пĕрремĕш конференцийĕ Милли обществине пĕтерсе хучĕ. 3 уйăха яхăн ĕçленĕ Милли обществи пĕтрĕ. Çав кунсенчех шăтса тухнă «Канаш» союзĕ Милли обществине хупласа хурса çултан-çул ӳссе вăйланса пычĕ. «Канаш» союзĕ чăвашсен çĕнĕрен-çĕнĕ ӳссе пыракан çамрăк писателĕсене пĕрлештерсе пынипе Чăваш Пролетари Писателĕсен Ассоциацийĕ пулса тăчĕ. Чăваш Пролетари Писателĕсен Ассоциацийĕ (ЧАПП) чăваш илемлĕ литературинчи пролетари идеологишĕн ют юхăмсемпе, вак буржуаллă, национализмлă, национал-демократиллĕ шухăшсемпе вирлĕн кĕрешсе пырса вĕсене тĕппипех çĕмĕрсе тăкрĕ. «Канаш» союзĕ 10 çул тултарнă вăхăтра ЧАПП ĕречĕсем сарăлса çитсе вăл Чăваш Совет Писателĕсен союзĕ пулса тăчĕ. [...]

*1933, июль*

*Элкер, С. Милли ушкăнĕнчен – «Канаш» союзне : [аса илӳ] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 258-263.*